

# Килне таврăнма çунакан мăшăру Ухсай Яккăвĕ

**(Вăрçăран янă çырусенчи сăвăсем)**

Вăрçă вăл телевизорпа кăтартакан кино мар, вăл калама çук хăрушă япала тетчĕ пирĕн атте Чăваш халăх поэчĕ Яков Ухсай. Халĕ, Виктор Астафьевăн «Убиты и прокляты» кĕнекине вуланă май, эпĕ хăлхара атте сасси тăнине туятăп.

1941 çулхи çуркунне атте çĕнĕ поэма çырас тĕллевпе яла каять. Кĕçех усал хыпар тухать: вăрçă пуçланнă. Атте васкавлăн хулана таврăнать. Малтан вăл халăх ополченийĕнче пулать, аманиччен халăх тăшманĕн ячĕпе çӳрет, çапла хаяр тытăçусен тĕтĕмĕ-кĕрлевĕнче вăрçăн пĕрремĕш çулĕ иртет. 1942 çулхи çу уйăхĕнче 141 стрелковăй дивизи ретне тăрать. «Максим» пулемет расчечĕн иккĕмĕш номерĕ пулса вут-çулăмри Воронежшăн çапăçать, вăрçă ахăр саманинче çĕршыва хӳтĕлет, çавăнтах «Родина зовет» ятлă дивизи хаçачĕн литсотрудникĕ пулма хушу илет. Ку хушăва илесси пĕр пăтăрмахпа çыхăннă. Атте ун çинчен çапла каласа паратчĕ: «Пирĕн батальон вăрманта Поворино станцийĕ патĕнче тăратчĕ. Эпĕ батальон штабĕ умĕнче хуралтаччĕ. Çĕр пӳртре комиссарпа начхим ларатчĕç. Вĕсем литература çинчен калаçнине эпĕ те хăлхана чикрĕм.

— Лайăх çырать Толстой, — тет начхим. — Эпĕ унăн «Çăкăр» романне питĕ килĕштертĕм.

— Çапла, Толстой пурнăçа тĕрĕс кăтартать. Эсĕ унăн «Вăрçăпа мир» романне те вуласа тух.

Икĕ Толстойран пĕр Толстой туса хунине асăрханă часовой ирĕксĕрех калаçăва хутшăнать, пуçлăхсене виççĕмĕш Толстой çинчен аса илтерет.

— Эсир «Князь Серебряный» кӗнекене те вулӑр, — тет вӑл.

— Эс ӑҫта сӗкӗнетӗн? Аслисем калаҫнӑ чух кӗҫӗннин ҫӑвара шыв сыпмалла, — тет пуҫлӑхсенчен пӗри.

Паллах, калаҫӑвӗ пулемет е унӑн пайӗсем пирки пынӑ пулсан эпӗ ҫӑвара уҫас ҫукчӗ-ха, анчах вӗсем литературӑна ӑнланманни калаҫӑва хутшӑнма хистерӗ. Ҫав чӑрсӑрлӑхшӑн мана виҫӗ талӑклӑха арестлерӗҫ.

Батальон командирӗ Мягченко аслӑ лейтенант, эпӗ постра ҫуккине асӑрхасан, хӑйӗн ҫумӗсене пӗҫерккӗ парать, мана гауптвахтӑран кӑларттарать. Шӳте-кулӑша ӑнланакан украин ҫак пӑтӑрмах ҫинчен дивизи штабӗнче каласа кӑтартать. Виҫӗ Толстойшӑн аслисенчен патак ҫинӗ рядовой шӑпи кунта та интереслентерсе ярать. Брезент пиҫиххие, пилоткӑпа противогаза каялла тавӑрса панӑ хыҫҫӑн икӗ-виҫӗ сехетренех мана дивизи комиссарӗ Мельников чӗнтерчӗ, «Родина зовет» хаҫат литсотрудникӗ пулма ҫирӗплетрӗ. Каярахпа мана «Вперед к победе» ҫар хаҫачӗн редакцине куҫарчӗҫ, унтан Кантемировски гварди танк корпусӗн «На штурм» хаҫатӗнче ӗҫлерӗм. Вӑрҫӑ тӑршшӗпех — чи малти линире».

Атте вӑрҫӑ ҫулӗпе ҫӳренӗ май икӗ хутчен танкра ҫуннӑ, виҫӗ хутчен аманнӑ, пуҫран контузиленнӗ. Прагӑна ҫитнӗ капитан ҫартан 1946 ҫулта таврӑнать.

Аттен анне патне янӑ ҫырӑвӗсенче хроника паллисем ҫук, анчах «Хаяр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ» тени кашнинчех тӗл пулать, аннене ӑшӑ сӑмахпа хавхалантарать атте, ӑна шеллет, пултарулӑх ыйтӑвӗсемпе канашлать. Ҫырусенче вӗсене чӑн-чӑн юрату ҫыхӑнтарса тӑни лайӑх курӑнать.

Атте вӑрҫӑран чӗррӗн-сыввӑн таврӑннинчен анне тӗлӗнетчӗ, уншӑн савӑнатчӗ. Ҫавӑ пулать те ӗнтӗ юрату ҫынна тамӑк витӗр чӗррӗн кӑларнин тӗслӗхӗ.

Вӑрҫӑ — пысӑк тӗрӗсмарлӑх, тискерлӗх, усаллӑх. Ҫынсем ун хӑрушлӑхне шута илмеҫҫӗ, ҫавӑнпа час-часах вӑй виҫме пикенеҫҫӗ, хӗҫпӑшал тытаҫҫӗ. Чечен вӑрҫи те шӑпах ҫак сӑмахсене ҫирӗплетет. Мӗн чухлӗ яш каччӑ пӗтет унта, мӗн чухлӗ хӗр качча каймасӑр юлать. Салтак амӑшӗсен комитечӗсем ывӑлӗсене хӳтӗлеме тӑрӑшаҫҫӗ, анчах ку ҫителӗксӗр.

Аттен шӑллӗ Кириле, ӑслӑ, илемлӗ каччӑ, фронтра вилнӗ. Аттесен килӗнче икӗ хӗр качча тухман, савнийӗсем вӑрҫӑра пуҫ хунипе ӗмӗрӗсене хӑраххӑнах ӗмӗрленӗ. Шел, ҫак тӗрӗсмарлӑх паян кун та малалла тӑсӑлать.

**Атте калатчӗ: «Эпӗ хӗсметре пулнӑ икӗ тӗслӗ ҫарти туссем-юлташсем час-часах куҫ умне тухаҫҫӗ: хаяр атакӑсенче пӗтнӗ пехота ачисем тата танксенче ҫуннӑ тантӑшӑмсем». Унӑн вӑрҫӑ поэзийӗнче — ҫав туйӑмсем.**

Ольга УХСАЙ